Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчене тухать

67 (8133) № * Юн кун, 2013 çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 11-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Райхаçат парнисене çĕнсе илессишĕн



*Шăмат кун, сентябрĕн 7-мĕшĕнче, районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн çăмăл атлетика ăмăртăвĕ иртрĕ. Çакă Чăваш Ен пресса спорт фестивалĕн пĕрремĕш тапхăрĕ пулчĕ.*

*Сăн ӳкерчĕкре: Калайкасси шкулĕн çĕнтерӳçĕ-команди.*

**(Тĕплĕнрех хаçатăн 2, 3 страницисенче вулăр).**

## Уяв мероприятийĕсем ирттерме

**Республикăра**

Сентябрĕн 7-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Мускавра Раççей Федерацийĕн Правительствин Председателĕн çумĕпе Дмитрий Козакпа тĕл пулнă. Тĕл пулура республикăн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕпе, Канаша пысăк хула туса хума пулăшассипе, граждансене авариллĕ çурт-йĕртен лайăх çуртсене пурăнма куçарассипе, Шупашкар хулине никĕсленĕренпе 550 çул, Чăваш автономи облаçне туса хунăранпа 100 çул çитнине уявлассипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă.

Уяв мероприятийĕсене пурнăçа кĕртме 2015 – 2016 çулсенче федераци бюджетĕнчен 1,7 млрд тенкĕ уйăрма пăхнă. Ку укçа-тенкĕпе республикăри сывлăх сыхлавĕпе культура, спорт учрежденийĕсене реконструкци тăвĕç, Шупашкарăн инженери инфратытăмне çĕнетĕç.

Калаçу вăхăтĕнче палăртнă тăрăх юбилей кунĕсене хатĕрленни Чăваш Енри ялсене аталанма, вĕсен сăн-сăпатне илемлетме пулăшĕ, территорисене тирпей-илем кĕртессипе тата инфраструктура проекчĕсене пурнăçа кĕртессипе бюджетпа çыхăнман инвестицисемпе усă курма май парĕ.

2019 çулта Шупашкар хулине никĕсленĕренпе 550 çул, 2020 çулта Чăваш автономи облаçне туса хунăранпа 100 çул çитнине уявласси çинчен калакан указа РФ Президенчĕ Владимир Путин 2012 çулхи июнĕн 28-мĕшĕнче алă пуснă. Уяв мероприятийĕсен тĕп планне кăçалхи январь уйăхĕнче Раççей Правительствин хушăвĕпе çирĕплетнĕ. Уяв мероприятийĕсене йĕркелесе ирттерме пĕтĕмĕшле 25,7 млрд тенкĕ пăхса хăварнă. Вăл шутран федераци бюджетĕнчен 8,1 млрд тенкĕ, Чăваш Республикин бюджетĕнчен 9,7 млрд тенкĕ, бюджетпа çыхăнман çăл куçсенчен 7,9 млрд тенкĕ уйăрма палăртнă.

**Сентябрĕн 8-мĕшĕнчи суйлав итогĕсем**

## Ял тăрăхĕн пуçлăхне суйланă

***2013 çулхи сентябрĕн 8-мĕшĕнче пирĕн районта Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхĕн вăхăт тухмасăрах ирттерекен суйлавĕ пулчĕ. Ял тăрăхĕнче списока кĕртнĕ суйлавçăсен 59,31 проценчĕ сасăлава хутшăннă. Суйлавçăсен чи нумай сассине пухса Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхне Владимир Михайлович Ляченков суйланнă.***

**Муркаш территори суйлав комиссийĕн 2013 çулхи сентябрĕн 8-мĕшĕнчи 92/1 № йышăнăвĕнчен**

Муркаш территори суйлав комиссийĕ çапла йышăннă:

1. Муркаш территори суйлав комиссийĕн Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхне вăхăт тухмасăрах суйланин результачĕсен протоколне çирĕплетес.

2. Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхĕн вăхăт тухмасăрах ирттерекен суйлавĕ иртнĕ тата вăл саккунлă тесе йышăнас.

3. Владимир Михайлович Ляченков Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхне суйланнă тесе йышăнас.

* * *

Суйлавçăсен списокне кĕртнĕ суйлавçăсен хисепĕ – 1531.

Суйлав кунĕнче сасăлав пӳлĕмĕнче суйлавçăсене панă бюллетеньсен хисепĕ – 769.

Суйлав кунĕнче сасăлав пӳлĕмĕн тулашĕнче суйлавçăсене панă бюллетеньсен хисепĕ – 139.

Юрăхсăр тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ – 16.

Юрăхлă бюллетеньсен хисепĕ – 892.

**Кандидатсем сасă пухнă:**

Эдуард Михайлович Васильев – 199 (21,92 процент).

Татьяна Петровна Кондратьева – 11 (1,21 процент).

Борис Юрьевич Леденцов – 293 (32,27 процент).

**Владимир Михайлович Ляченков** – 336 (37,00 процент).

Наталия Васильевна Сергеева – 50 (5,51 процент).

Евгений Викторович Чаленко – 3 (0,33 процент).

Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене суйласси çинчен» Саккунĕн 3-мĕш статйипе килĕшӳллĕн суйлава хутшăннă суйлавçăсен сассине чи нумай пухнă май Владимир Михайлович Ляченков Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхне суйланнă шутланать.

**Видеоконференци**

## Бюджет хатĕрлессин ыйтăвĕсемпе

**Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев сентябрĕн 9-мĕшĕнче район администрацийĕсен тата хула округĕсен пуçлăхĕсемпе видеоконференци ирттерчĕ. Унăн ĕçне район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев та хутшăнчĕ.**

Видеоконференци теми федерацин кăçалхи майăн 7-мĕшĕнче вăя кĕнĕ «Раççей Федерацийĕн Бюджет кодексне тата бюджет процесĕ çĕнелсе улшăннă май Раççей Федерацийĕн хăш-пĕр актне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккунĕпе çыхăннă. Унпа килĕшӳллĕн муниципалитет йĕркеленĕвĕн шайĕнче малашне «бюджет» ăнлав вырăнне «муниципалитет программи» пулать. Вăл тĕллевлĕ тăкаксен кашни статйипе уйрăммăн ĕçлеме хистет. ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – финанс министрĕ Михаил Ноздряков вырăнти бюджет докуменчĕсене асăннă саккун положенийĕсемпе сентябрĕн 25-мĕшĕччен пĕрпеклетсе çитермеллине палăртрĕ, октябрĕн 1-мĕшĕччен вара нормăпа право акчĕсем хатĕр пулмалла.

Видеоконференцин иккĕмĕш ыйтăвĕ шкулсемпе ача сачĕсене СанПиН нормисемпе килĕшӳллĕн пахалăхлă ял хуçалăх продукчĕсемпе тивĕçтерессипе çыхăнчĕ.

**Райадминистрацире**

## Хисеп грамотипе наградăланă

***Нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн тата машинăсем тăвас ĕçри çитĕнӳсемшĕн район администрацийĕн 2013 çулхи сентябрĕн 5-мĕшĕнчи 936 № йышăнăвĕпе акционерсен «Шупашкарти «Сеспель» предприяти» хупă обществин çак ĕçченĕсене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Сергей Валерьевич АНДРЕЕВА**, механосборка ĕçĕсен слесарьне;

– **Андрей Витальевич ВАСИЛЬЕВА**, электрогазосварщика;

– **Александр Геннадьевич САЛЬНИКОВА**, гараж механикне;

– **Эдуард Валерианович СЕМЕНОВА**, числопа программа мелĕпе ĕçлекен станоксен операторне;

– **Татьяна Германовна ТЯБУКОВĂНА**, маляра;

– **Михаил Константинович СИМЕНЬЕ**, механосборка ĕçĕсен слесарьне.

**Çырăнтару – 2013**

## Хаçатсăр кĕркунне те, хĕлле те кичем

**Хаклă вулаканăм! Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата октябрь уйăхĕнчен илсе тăма малалла çырăнтарăççĕ. Малашне те пĕрле пулар!**

**Саламлатпăр**

Чи хаклă çыннăмăра, юратнă, хисеплĕ аннене, асаннене, тăванăмăра – Мăн Токшик ялĕнче пурăнакан **Маргарита Самуиловна ЕВСТАФЬЕВĂНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан чи ăшă та çепĕç сăмахсемпе саламлатпăр. Сывлăху санăн çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр, Турри вăй-хал парса тăтăр, чир-чĕртен упратăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн – пысăк телей, савăнăç.



Эс пурри пире савăнтарать,
Пурăнма татах хăват парать.
Ялан пул эс пирĕнпе пĕрле,
Йышра, тулли кĕрекере.

Çак кунсенче Антонпа Роман мăнукĕсен те çуралнă кунĕсем, вĕсене çирĕп сывлăх сунатпăр.

**Саламласа: мăшăрĕ, 2 ывăлĕ, 2 кинĕ, 5 мăнукĕ, тăхлачи, тăванĕсем.**

Дорогой наш любимый папа, дедушка **СМИРНОВ Василий Федорович,** мы рады поздравить тебя с прекрасным юбилеем, 70 лет – уважаемый возраст.



Мы любим тебя, мы тебя уважаем,
Здоровья желаем и счастья желаем!
Пусть много безоблачных радостных дней
Тебя еще ждет средь родных и друзей!

**С поздравлением дети, внуки, правнучка.**

Чи хаклă çыннăмăра, аннене, хунямана, асаннене – Шомик ялĕнче пурăнакан **Тамара Ивановна КУЗНЕЦОВĂНА** 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр. Турри вăй-хал парса тăтăр, чир-чĕртен сыхлатăр. Сана хисеплесе çĕре çити пуç таятпăр.



**Саламлаканĕсем: ывăлĕ, кинĕ, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, хăтисем, тăхлачисем, кӳршисем.**



Пирĕн юратнă, хаклăран та хаклă аттепе аннене, асаттепе асаннене – Москакасси ялĕнче пурăнакан **Инна Петровнăпа Виталий Евдокимович АЛЕКСАНДРОВСЕНЕ** çемье çавăрни 35 çул çитнĕ ятпа ăшшăн саламлатпăр. Тавах сире ырă кăмăлусемшĕн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн, пирĕн ыратусене хăвăр витĕр кăларнăшăн. Сирĕн ылтăн аллусемшĕн тав сăмахĕ калатпăр. Эсир пурри пирĕншĕн – нимĕнпе висеймен пуянлăх, савăнăç, телей. Турри сире чир-чĕртен упратăр, вăй-хал парса тăтăр.

**Салампа: хĕрĕ, кĕрӳшĕ, икĕ мăнукĕ, тăванĕсем.**

# Райхаçат парнисене çĕнсе илнисем –



Чăваш Ен пресса спорт фестивалĕн пĕрремĕш тапхăрне В. Шапошников уçрĕ.

## УЯР КУНПА ĂША СĂМАХСЕМ СПОРТСМЕНСЕМШĔН – ХАВХАЛАНУ

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата çанталăк та кăмăллать тейĕн. Ытти чухне вĕççĕр-хĕрсĕр çумăр çурĕ пулсан, çак кун хĕвелĕ те кашни çынна ăмăрту лаптăкне чĕнчĕ, кăмăла çĕклерĕ, финиша хăвăртрах тухма йыхравларĕ.

Чăваш Ен пресса спорт фестивалĕн пĕрремĕш тапхăрне район хаçачĕн тĕп редакторĕн тивĕçне пурнăçлакан Владислав Шапошников уçрĕ, ăшă сăмахсем каларĕ, сывă пурнăç йĕркин пĕлтерĕшне палăртрĕ.

– Муркаш районĕ яланах спортпа çывăх пулнă, çакна чылай ĕç-хĕл çирĕплетет. Пирĕн ентешсем тĕрлĕ шайри ăмăртура çĕнтереççĕ. Апла пулсан вĕсем пирĕншĕн яланах ырă тĕслĕх вырăнĕнче пулмалла. Спортпа туслă пулас йăла малашне те тăсăлĕ. Сирĕн хушăра ăста тренерсен вĕренекенĕсем чылай. Эсир йышлă пулни пире хавасланатарать. Муркаш районĕ çитес çул çитмĕл çул тултарать. Çавăн пекех «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат та – унăн тантăшĕ. Апла пулсан вĕсене числар, ăмăртура активлă пулар, сире эстафета çула тухма чĕнет, – терĕ Владислав Леонидович ăмăртăва уçнă май.

Ăмăртăва хутшăнакансене район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев саламларĕ.

– Сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансемшĕн, сывлăха çирĕплетес текенсемшĕн халĕ районта пур услови те туса панă. Маларах вара эпир бассейн тата ытти сооружени пирки ĕмĕтленнĕ кăна. Акă «Сывлăх» комплекс кăна мĕне тăрать, ку тĕлĕшри ытти учреждени те сире валлиех ĕçлет. Çакăнта, паллах, патшалăх тивлечĕ пысăк. Кĕçĕннисемшĕн те, аслисемшĕн те вĕсем питĕ меллĕ. Çавăнпа та пуррипе туллин усă курма тăрăшмалла. Кирек епле ăмăртăва та ытларах хутшăнмалла, – терĕ Ростислав Николаевич пурне те ăнăçу сунса.

Çапла вара вĕсем спортпа туслашни пурнăçра çирĕп тĕллевлĕ пулма, ответлăха туйма, вĕренӳпе ĕçре ĕлкĕрсе пыма пулăшнине палăртрĕç.

Асăннă ăмăрту çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче пĕрремĕш пулчĕ. Муркашăн тĕп урамĕнче уяв пулни аякранах курăнчĕ: эстафета çулне кăтартакан тĕрлĕ-тĕслĕ паллăсем, «Сывлăх» ФСК умĕнче янăракан хаваслă юрă-кĕвĕ, пысăк йыш тата ытти те.



Сĕтел парнесемпе тулăх.



Ăмăртăва хутшăнакансен команди йышлă пулни савăнтарать.



Муркаш тĕп урамĕнче халăх йышлă.



Кашни спортсмен финиша маларах тухма тăрăшрĕ.

## ПĔРЛЕ ЭПИР ЫТЛАРАХ ТА

Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн иртнĕ ăмăртăва тĕп шкулсен вунă, вăтам шкулсен вун сакăр команди, предприятисемпе организацисен пилĕк команди хутшăнчĕ.

Уйрăмах Ярапайкасси, Мăн Сĕнтĕр, Муркаш, Йӳçкасси шкулĕсене ырăпа палăртмалла, вĕсем икшер команда йĕркеленĕ. Чи маттуррисем ку енĕпе – Калайкассисем. Асăннă шкултан виçĕ команда ăмăртăва хутшăнчĕ.

Шкул ачисемпе ĕç коллективĕсен командисем эстафетăра кусса çӳрекен кубоксене тата хаклă парнесене çĕнсе илессишĕн вăй виçрĕç.

Шел, ял тăрăхĕсен командисене курма май килмерĕ Чăваш Ен прессăпа спорт фестивалĕн пĕрремĕш тапхăрĕнче. Ку ĕçе йĕркелессинче вĕсен пуçлăхĕсем аякра пулни аван курăнчĕ. Сывă пурнăç йĕркине тытса пыма, массăллă спорта явăçтарма тăрăшмалла тетпĕр, асăннă категори ăмăртăва хутшăнманни – пысăк çитменлĕх.

## ÇУЛА ТУХАР!

Çапла вара ăмăртăвăн тĕп судйи Владимир Петров программăпа паллаштарчĕ. Вăтам шкулта тата тĕп шкулта вĕренекенсен командисенче 3 арçын ачапа 3 хĕр ача пулчĕ. Ĕç коллективĕсен командисенче вара – 3-шер арçынпа 2-шер хĕрарăм. Шкул ачисем вĕренӳ çулĕнчи пĕрремĕш старта хатĕрленчĕç. Акă старт янăрарĕ. Асфальт çул тăрăх 400 метрлă дистанци спорт тусĕсене йышăнчĕ.

## ВĔСЕМ – ÇĔНТЕРӲÇĔСЕМ

Çĕнтерни мар, хутшăнни пĕлтерĕшлĕ теççĕ. Çапах та кашниех финиша маларах çитме тăрăшрĕ.

Ырă йăла тăсăмĕ пулĕ ку, Калайкассисемпе (тăваттăмĕш хут) Шетмĕпуç (виççĕмĕш хут) спортсменĕсем – сулленхи çĕнтерӳçĕсем. Асăннă командăсем вара иртнĕ çулах пĕрремĕш пулма шантарса хунăччĕ, хăйсен сăмахне тытрĕç курăнать.

Çапла вара тĕп шкулсен эстафетинче Шетмĕпусĕнчи шкул ачисен команди пĕрремĕш вырăна

Ĕç коллективĕсен эстафетинче Муркашри тĕп больница команди чи маттурри пулчĕ.



# Чăваш Ен пресса спорт фестивальне


Кашниех старта тухма хатĕр.

тухрĕ. Вĕсем виҫҫĕмĕш хут кубока ҫĕнсе илчĕҫ, асăнмалăх парнене тивĕҫрĕҫ. Командăри кашни ачана медаль ҫакса ячĕҫ.

Иккĕмĕш вырăна Шомиксем тухрĕҫ, виҫҫĕмĕшне – Сосновкăсем. Вĕсем те медальсемпе парнесене тивĕҫрĕҫ. Кашни ача сăн-питĕнче ăшă кулă палăрчĕ.

Вăтам шкул командисен ăмăртăвĕ те хĕрӳ тупăшура иртрĕ. Финиша Калайкассисем чи малтан ҫитрĕҫ, кубока ҫĕнсе илчĕҫ, хаклă парнеллĕ пулчĕҫ. Иккĕмĕш вырăнта – Муркашсем, виҫҫĕмĕш пусăмра – Калайкасси шкулĕнчи тепĕр команда.

Ĕҫ коллективĕсен эстафетинче Муркашри тĕп больница команди чи маттурри пулчĕ. Иккĕмĕш вырăна «Районти ачасемпе ҫамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК команди тухрĕ, район администрацийĕн команди – виҫҫĕмĕш.

– Хисеплĕ спорт тусĕсем, сире пурне те ăмăртăва хутшăннăшăн тав тăватăп. Йăлана кĕнĕ ăмăртăва малашне те тивĕҫлĕ шайра ирттерме шантаратпăр, – терĕ Владислав Леонидович ăмăртăва вĕҫленĕ май.

Сыхлăх шучĕпе медицина ĕҫченĕсем те кунтах пулчĕҫ. Муркаш райповĕ вара ырă йăлана тăсса вĕри чейпе, тутлă ҫимĕҫпе сăйларĕ.


Ҫак самант – чи пăлханулли.

## ҪĔНТЕРӮҪĔСЕНЕ РЕСПУБЛИКА ЙЫХРАВЛАТЬ

Асăннă ăмăртăван ҫĕнтерӳҫисем «Советская Чувашия» хаҫат парнисене ҫĕнсе илессишĕн 75-мĕш юбилейлă ҫăмăл атлетика эстафетине хутшăнĕҫ. Ăна чăвашăн мухтавлă ывăлне, Совет Союзĕн икĕ хут Геройне, СССР летчик-космонавтне, Чăваш Республикин Хисеплĕ гражданинне Андриян Николаева асра тытнине халалланă. Вăл пурăннă пулсан сентябрĕн 5-мĕшĕнче 84 ҫул тултарĕччĕ. Сумлă ҫыннăмăра хисеплер, массăллă спорт ăмăртăвĕсенче активлă пулар. Республика шайне тухакансене ăнăҫу сунар тата район ятне ҫӳлте тытма сĕнер.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Р. Илларионова, Н. Григорьева сăн ӳкерчĕкĕсем.**


Шетмĕпуҫсем – пĕрремĕш вырăнта.


Район администрацийĕн команди финиша виҫҫĕмĕш ҫитрĕ.

## АУКЦИОН

Извещение о проведении аукциона на право заключения договоров купли-продажи земельных участков

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики (далее – организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе, открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров купли-продажи (далее – аукцион) земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

Основание: постановление администрации Моргаушского района Чувашской Республики от 05.09.2013 г. № 938. Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: imu4@morgau.cap.ru, http://gov.cap.ru/main.asp?govid=71.

Характеристика объектов купли-продажи:

Лот №1 – земельный участок с кадастровым номером 21:17:170203:115, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Кашмаши, ул. Советская, для ведения строительства магазина, площадью 56 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 40000 (сорок тысяч) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (8000 руб. 00 коп.)

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (2000 руб. 00 коп.)

Лот №2 – земельный участок с кадастровым номером 21:17:200102:177, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Ойкасы, ул. Кузнечная, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 1500 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 59 850 (пятьдесят девять тысяч восемьсот пятьдесят) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (11 970 руб. 00 коп.)

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (2 992 руб. 50 коп.)

Лот №3 – земельный участок с кадастровым номером 21:17:061901:1303, категории «земли промышленности, энергетики, транспорта, связи, радиовещания, телевидения, информатики, земли для обеспечения космической деятельности, земли обороны, безопасности и земли иного специального назначения», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, для переработки древесины и складирования стройматериалов, площадью 10 000 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 480 400 (четыреста восемьдесят тысяч четыреста) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (96 080 руб. 00 коп.)

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (24 020 руб. 00 коп.)

Информация о проведении аукциона: перечень документов, представляемых заявителем для участия в аукционе:

1. Заявка на участие в аукционе (в установленной форме) в 2-х экземплярах, с указанием реквизитов счета для возврата задатка. Заявки на участие в аукционе принимаются в кабинете № 312 по рабочим дням по адресу организатора аукциона.

2. Платежный документ (и его копия), подтверждающий внесение заявителем задатка. Задаток перечисляется на реквизиты: получатель платежа – администрация Моргаушского района, ИНН 2112001366 КПП 211201001, лицевой счет 05123ЧМ0012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810175025013018 в Чувашском отделении №8613 ОАО «Сбербанк России», кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа (адрес участка) и дату аукциона.

Задаток возвращается всем претендентам аукциона, в соответствии с условиями договора о задатке, кроме победителя, в течение 5-х банковских дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

3. Выписка из Единого государственного реестра юридических лиц – для юридических лиц, выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей – для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность – для физических лиц.

4. Физическое лицо предъявляет документ, удостоверяющий личность. В случае подачи заявки представителем претендента предъявляется доверенность.

5. Юридическое лицо дополнительно прилагает к заявке нотариально заверенные копии учредительных документов и свидетельства о государственной регистрации юридического лица, а также выписку из решения уполномоченного органа юридического лица о совершении сделки (если это необходимо в соответствии с учредительными документами претендента и законодательством государства, в котором зарегистрирован претендент) (кроме участия в аукционе на право заключения договора купли-продажи земельного участка для индивидуального жилищного строительства).

Заявителем предоставляется опись документов в 2-х экземплярах.

Сроки приема и окончания приема заявок на участие в аукционе – с 11 сентября 2013 года по 11 октября 2013 года.

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее, чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе. С документацией об аукционе, в том числе с формой заявки и проектом договора купли-продажи земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, каб. №312.

Требования к участникам аукциона:

В аукционе на право заключения договоров купли-продажи земельных участков может принять участие любое юридическое лицо независимо от организационно-правовой формы, формы собственности, места нахождения и места происхождения капитала или любое физическое лицо, в том числе индивидуальный предприниматель, претендующее на заключение договора, соответствующие требованиям, предусмотренным документацией об аукционе, и подавшее заявку на участие в аукционе.

Рассмотрение заявок на участие в аукционе на предмет соответствия требованиям, установленным документацией об аукционе, состоится на заседании комиссии – 14 октября 2013 года в 16.00 часов по адресу организатора аукциона. Ознакомление с земельным участком на местности: в рабочее время по предварительному согласованию с представителем отдела имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района.

Победителем аукциона признается лицо, предложившее наиболее высокую цену приобретения в собственность земельного участка. По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора купли-продажи земельного участка. Договор купли-продажи земельного участка заключается в срок не позднее 10 рабочих дней со дня подписания протокола.

Определение участников аукциона состоится 15 октября 2013 года по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, 3 этаж, каб. 312. Время проведения открытого аукциона (по московскому времени): Лот №1–09.30, Лот №2 – 10.00, Лот №3 – 10.30.

## Администрация Моргаушского района сообщает о предоставлении земельного участка

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:220501:215, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Карманкасы, ул. Озерная, для установки гаража, площадью 24 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

* * *

В объявлении о согласовании проекта межевания земельного участка, заказчиком которого является: муниципальное образование – Ильинское сельское поселение Моргаушского района Чувашской Республики, опубликованного в райгазете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 24 ноября 2012 года в № 91 (8052), стр. 8, в 1 колонке, в конце данного объявления следует добавить «Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37 (филиал ФГБУ «ФКП Росреестр»)».

## Пĕлтерӳсем. Объявления


КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ ГРАЖДАН

КапиталЛ

Поможем и приумножим! 1-10.

Выгодный вид сбережений 29%

от 10 000 до 700 000 руб., от 6 месяцев до 3 лет***

ПРИНИМАЕМ СБЕРЕЖЕНИЯ

ВЫДАЕМ ЗАЙМЫ ОТ 3,1%

КПКГ “КапитаЛ” удерживает налог на доходы физических лиц с начисленных процентов, в соответствии с Налоговым кодексом РФ. При досрочном расторжении договора процентная ставка рассчитывается по программе “До востребования”, 6% годовых.
*** Данный вид сбережений доступен каждому члену КПКГ “КапитаЛ”

г. Чебоксары, пр. Московский, д. 14, 2 этаж
г. Цивильск, ул. Никитина, д. 8
г. Шумерля, ул. Жукова, д. 14
с. Моргауши, ул. Мира, д. 5а
8-927-990-93-10
8(8352)222-830
kapital-21.ru, kpk_kapital@list.ru

КПКГ "КапитаЛ" является членом саморегулируемой организации "Межрегиональный союз кредитных кооперативов"

КПКГ "КапитаЛ" только для членов кооператива, подробности по телефонам

Цифровое спутниковое телевидение ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 2-10.

“ВИКТОРИЯ-ОКНА” ЗАМЕР, ДОСТАВКА БЕСПЛАТНО 5-10.
СРОК ИЗГОТОВЛЕНИЯ 3-5 ДНЕЙ
АКЦИЯ БАНКА: весь месяц сентябрь кредит на окна без процентов.
ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА
МЕТАЛЛИЧЕСКИЕ ДВЕРИ
НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
ОТ ПРОИЗВОДИТЕЛЯ
ГАРАНТИЯ КРЕДИТ РАССРОЧКА
СКИДКА до 35%
7-е окно в ПОДАРОК
REHAU Unlimited Polymer Solutions, brusbox, KBE, ARTEC оконные системы
Производственный цех, с. Моргауши, ул. Гагарина, 16 а (здание котельной).
Тел.: 62-1-20,8-917-662-71-64, 8-937-955-33-00.

Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83. 1-10.

Спутниковое цифровое телевидение ТРИКОЛОР - 7300 руб. +подарок на 500 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30. 10-10.

Немецкие качественные пластиковые окна. Замер, доставка, установка – бесплатно. СКИДКИ. Тел.: 8-927-844-78-11. 4-10.

ПРОДАЮ: ОПГС (ГРАВМАССУ), ПЕСОК, ЩЕБЕНЬ ВСЕХ ФРАКЦИЙ. Тел.: 8-937-384-06-50, 8-927-995-07-51. 16-21.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 8-10.

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ Тел.: 8-927-667-40-92. 3-33.

Продаю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши по ул. 50 лет Октября, д. 22, недорого, возможен торг. Тел.: 8-937-956-43-40. 2-2.



ТЕПЛИЦЫ от производителя из сотового поликарбоната 3х6, 3х8 и т. д. Телефоны: 8-917-651-00-76 8-927-858-28-79.


* * *

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:121301:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Паргеева Валентина Владимировна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Идагачкасы, ул. Советская, д. 10.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:121301:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

* * *

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:121301:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Порфирьев Борис Михайлович, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Идагачкасы, ул. Восточная, д. 5.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:121301:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

## Прогноз погоды

| | среда 11 сентября | | | | четверг 12 сентября | | | | пятница 13 сентября | | | | суббота 14 сентября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +8 | +12 | +14 | +11 | +10 | +13 | +14 | +11 | +9 | +13 | +14 | +11 | +10 | +12 | +13 | +10 |
| Давление мм | 748 | 749 | 749 | 750 | 750 | 751 | 751 | 751 | 751 | 752 | 752 | 752 | 751 | 752 | 752 | 751 |
| Влажность % | 87 | 74 | 67 | 82 | **94** | 82 | 72 | 86 | **96** | 80 | 65 | 90 | **96** | 89 | 76 | **93** |
| Ветер м/сек | 3 | 5 | 6 | 1 | 1 | 1 | 2 | 2 | 2 | 0 | 2 | 2 | 2 | 1 | 3 | 2 |
| | С-В | С-В | С-В | С | С | С-В | С-З | З | З | ШТЛ | С | З | З | С-З | С | З |
| Солнце восход / заход | | 06:18 | 19:20 | | | 06:19 | 19:18 | | | 06:21 | 19:15 | | | 06:23 | 19:12 | |
| Луна восход / заход | | 13:32 | 21:44 | | | 14:38 | 22:36 | | | 15:34 | 23:40 | | | 16:20 | - | |

## Тав тăватпăр

Мăн Сĕнтĕр ялĕнче пурăннă Владимир Борисович Сергеева юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн Мăн Сĕнтĕр райповĕн коллективне, Мăн Сĕнтĕр больницин ĕçченĕсене, тăвансене, кӳршĕсене чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр.

**Сергеевсен çемйи.**

**Чувашская Республика**
**Моргаушский район**
**Глава Моргаушского сельского поселения**
**ПОСТАНОВЛЕНИЕ**
**2013г. № 6**
**село Моргауши**

**О проведении публичных слушаний по проекту решения муниципального правового акта «Об изменении вида разрешенного использования земельного участка»**

В соответствии со статьей 28 закона Российской Федерации от 06.10.2003г. № 131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации» и ст.14 Устава Моргаушского сельского поселения Моргаушского района постановляю:

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении вида разрешенного использования земельного участка» с кадастровым номером 21:17:160302:632 18 сентября 2013 года в 18 часов 00 минут по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, улица 50 лет Октября, д. 42 а.

2. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ».

**Глава Моргаушского сельского поселения С.Н. ЕРМОЛАЕВ.**

**Проект муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

Руководствуясь п. 10 ст. 3 Федерального закона от 25 октября 2001 года №137-ФЗ « О введении в действие Земельного кодекса Российской Федерации», с учётом результатов публичных слушаний администрации района постановляет:

Изменить разрешенное использование земельного участка с кадастровым номером 21:17:160302:632 из категории «земли населенных пунктов», местоположение: Республика Чувашия, район Моргаушский, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, улица 50 лет Октября, с разрешенного использования «для размещения складского помещения временного торгового павильона» общей площадью 21 кв.м. на вид разрешенного использования «для строительства и эксплуатации магазина».

С предложениями по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Моргаушского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 18.09.2013 года до 15-00 часов.

**Глава Моргаушского сельского поселения С.Н. ЕРМОЛАЕВ.**


Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 2-25.

ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 1-10.

* * *

Срочно куплю двух- или трехкомнатную квартиру в с. Моргауши. Тел.: 8-917-670-73-98, 8-917-658-09-53. 1-2.

* * *

Продаю березовые дрова. Тел.: 8-903-065-58-68. 1-3.

* * *

Продаю поросят. Доставка. Тел.: 8-927-858-04-29.

* * *

Продаю сеялку СЗТ-3,6; культиватор КПС-4; кормоуборочный комбайн Е-281; плуг ПЛН-4-35; культиватор тяжелый КПЭ-3,8А; культиватор КФК-2,8; картофелесажалку КСМ-4А; плуг ПЛН-3-35; плуг навесной оборотный ibis L 4+1; косилку КПС-5. Тел.: 8-905-027-40-65.

* * *

Продается автомашина Лада-приора ВАЗ-21703 (цвет кристалл). Тел.: 8-903-064-75-96.

* * *

В сельскохозяйственное предприятие «Ударник» требуются: зоотехник, доярки, скотники, механизаторы. Семейным предоставляется трехкомнатная квартира, а одиноким – благоустроенное жилье. Тел.: 8-917-670-72-49, 8-905-343-16-64. 3-10.

* * *

Требуются операторы автовесовой на песчаный карьер – Шешкары. Тел.: 8-917-078-86-60. 5-5.

* * *

Услуги спецтехники: КамАЗ-самосвал, погрузчик, бульдозеры. Тел.: 8-987-760-57-71. 2-2.

* * *

Продаем зернофураж: пшеница – 9 руб., ячмень – 8 руб., рожь – 6 руб., горчица – 40 руб. за 1 кг. Тел.: 8-987-760-57-71. 2-5.

* * *

ФГУП «Ударник» реализует поросят по цене 85 руб. за 1 кг живого веса. Тел.: 8-917-670-72-49, 8-905-343-16-64. 1-2.

* * *

Вăкăрсем, пăрусем, тынасем туянатпăр. Тел.: 8-987-665-02-13.

* * *

Требуются расклейщики в с. Моргауши. Тел.: 8-927-667-35-05. 1-2.

* * *

Требуется кредитный специалист, высшее образование, незаконченное высшее, знание ПК. Желателен опыт работы. Зарплата от 12000 руб. в месяц. Тел.: 8-927-667-30-21, 8-927-667-35-05. 1-2.


Совет, правление и коллектив Большесундырского райпо выражают глубокое соболезнование заведующей М-Татаркасинского магазина «ТПС» Сергеевой И.И. в связи с тяжелой утратой – смертью мужа

**СЕРГЕЕВА Владимира Борисовича.**


Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редакторшăн В.Л. ШАПОШНИКОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкрах хисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 10.09.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4771.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.